Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII · ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMIX

26 (7770) № ✻ Шăмат кун, 2010 çулхи апрелĕн (ака) 10-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Паянхи тĕп ыйту – техника юсасси

Фоторепортаж



**20 çул ытла çур акине хутшăнакан Герман Алжиров механизатор юсав ĕçĕсенчи çĕнĕлĕхсене Игорь Скворцов тĕп инженерпа сӳтсе явать.**

Ир-каç кăштах шăн таять пулсан та, çичĕ сехетрех хĕвел шевли лекекен çĕр пичĕ çинче шăн ирĕлме пуçлать. Юр сивви кăна темелле пулĕ ĕнтĕ ăна. Кун каçа сывлăш температури 12-14 градуса çити ăшăнни çĕр пичĕ çинчи юра хăвăрт ирĕлтерет. Çакна курса тата «Свобода» хуçалăхăн тĕп агрономĕ А. Блинов каласа панине итлесе, çĕр ĕçченĕ ку тăрăхра тахçанах хĕл ыйхинчен вăраннине асăрхатăп. Кашмаш каччин ĕçне мухтаса А. Токарев композитор вуншар çул ĕлĕкрехех ахальтен юрă хывман ĕнтĕ. Юрă йĕркисем паян та Кашмаш-Çатракасси ĕçченĕсемшĕн вырăнлă.

Кунпа мар, сехетпе çывхаракан çур акинче кăçал хуçалăхăн 620 гектар çуртрисемпе 30 гектар вырăх кăшманĕ акмалла, 180 гектар çĕр улми тата 12 гектар купăста лартмалла, 130 гектар хура пусă хăвармалла. Кунпа пĕрлех 520 гектар çинчи кĕрхи культурăсене, 1000 гектара яхăн нумай çул ӳсекен курăксене апатлантармалла. Вăхăт çитсен çак ĕçсенче чăрмав ан пултăр тесе хуçалăхра минераллă удобренисемпе сĕрмеллиçунтармалли материалсем янтăлама пуçланă ĕнтĕ.

**(Вĕçĕ 5-мĕш стр.).**

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

Ларуран

## Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем канашларĕç

***Апрелĕн 8-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусем ирттермелли пĕчĕк залĕнче ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен район пуçлăхĕ çумĕнчи канашĕн ларăвĕ иртрĕ. Ăна йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ Л.Ю. ТАРАСОВА ертсе пычĕ.***

Ларура пăхса тухма палăртнă ыйтусем сахал мар. Чи малтанах район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ В.А. Калинин обществăлла выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарнин итогĕсем, çурхи уй-хир ĕçĕсене хатĕрленесси епле пыни пирки каласа пачĕ. Вăрлăх енĕпе хуçалăхсенче лару-тăру япăхах мар пулин те, удобренисем, çунтармалли материалсем кӳрсе килессипе ыйтусем хуçалăхсенче пур-ха.

2010 çулхи пĕтĕм халăх Çыравне хатĕрленес ĕçсем епле пыни пирки Чăвашстатăн предприятисен статистикин Муркаш районĕнчи пайĕн тĕп специалист-эксперчĕ З.И. Виноградова тата халăх Çыравне ирттерессипе ĕçлекен районти уполномоченнăй А.С. Волков пĕлтерчĕç. Ку енĕпе ĕçсем япăх пыраççĕ тесе каламалла мар. Апла пулин те вырăнсенче татса памалли ыйтусем те пур. Адрес хуçалăхĕ те пур çĕрте те кирлĕ шайра мар.

Район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ Н.П. Милютин гражданла оборона енĕпе комплекслă тĕрĕслев ирттерессi пирки пĕлтерчĕ. Кунпа пĕрлех çурхи ейӳ тапхăрĕ пуçланать, пушар тухас хăрушлăх та ӳсет. Çавăнпа та пурин те тимлĕрех пулни кирлĕ.

Ял тăрăхĕсенче çар учечĕн ĕçĕсене лайăххрах туса пырассин ыйтăвĕсене республикăри çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсен уйрăмĕн пуçлăхĕ В.Е. Андреев уçса пачĕ.

Тепĕр икĕ ыйту – Чăваш Республикин Президенчĕн 2009 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнчи 99 № «Чăваш Республикинче çĕнĕ урамсене (ялсене) хăвăртрах электрификаци тăвасси çинчен» Указне пурнăçласси мĕнле пыни çинчен тата çурхи санитари тасатăвне ирттересси, ял тăрăхĕсен территорийĕсенчи экологи хăрушсăрлăхĕ çинчен. Ку ыйтусемпе район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçи В.Г. Никитин сăмах тухса каларĕ. Электрификаци валли хăвăртрах проектсем хатĕрлесе пĕтерсе экспертиза витĕр тухасси, тасалăхпа тирпейлĕхе тивĕçтерессi пирки çивĕч калаçу пулчĕ.

Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ З.Ю. Дипломатова çынсене физкультурăпа спорта анлăрах явăçтарма тăрăшмаллине палăртрĕ. Ку тĕлĕшпе вырăнсенче спорт ăмăртăвĕсем ирттерни çеç çителĕксĕр. Массăлăх пирки тимлемелле. Кунпа пĕрлех çынсене компьютерсемпе ĕçлеме хăнăхтарасси-вĕрентесси çинчен те манма юрамасть. Çакна валли вара шкулсенче база пур.

Юлашкинчен район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ Л.Ю. Тарасова район администрацийĕн кунĕсене ял тăрăхĕсенче ирттернин итогĕсем пирки чарăнса тăчĕ, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен район пуçлăхĕ çумĕнчи канашĕн ларăвĕн итогĕсене пĕтĕмлетрĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Кун йĕркинчи çивĕч ыйтусемпе

## Хваттерте хăтлă пурăнма

***Пурнăçри ырă улшăнусем нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакансем патне те çитрĕç. Иртнĕ çулсенче кунти йĕркелĕхе тытса пыма «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха ертсе пыракан компани» чикĕллĕ яваплăхлă общество туса хучĕç. Çĕнĕлĕх хваттерсенче пурăнакансем хушшинче нумай ыйтус çуратрĕ. Вĕсем çине тулли хуравсем парассипе ака уйăхĕн 8-мĕшĕнче Чăваш Республикинче пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх сферинчи право хутшăнăвĕсене татса парассипе пĕрлехи йышăну кунĕ иртрĕ. Райцентрта çак ятпа ирттернĕ тĕл пулăва Муркашри ял тăрăхĕсем хушшинчи централизациленĕ библиотека ертӳçи Т.Е. КОРОЛЬКОВА ертсе пычĕ. Тĕл пулăва пынисем нумай ыйтусене çул пачĕç, чылайăшĕ çине хуравсем те тупрĕç. Паян вĕсенчен хăшĕ-пĕри çине район центрĕнчи асăннă обществăн экономика специалисчĕ С.Н. ФЕДОРОВА хуравлать.***

**– Светлана Николаевна, пĕрремĕш ыйту: мĕн тĕллевпе йĕркеленĕ сирĕн чикĕллĕ яваплăхлă обществăна?**

– Нумайăшне хумхантарать паян çак ыйту. Анчах пурăнмалли çурт-йĕр фончĕпе çыхăннă ыйтусене пĕлсе ертсе пымалла-çке. Ахальлĕн çуртсем кивелеççĕ, шывпа, газпа тата ăшăпа тивĕçтерекен системăсене тĕрĕс-тĕкел ĕçлеттермелле, хваттерсенче пурăнакан çынсен пурнăç шайне йĕркеллĕ условисенче тытса пымалла. Пирĕн управленире паянхи 1564 хваттерте 76 пин тăваткал метр пурăнмалли çурт-йĕр пулнине пăхсан, йĕркене тивĕçтерсе тăрасси çăмăл ĕç марри куç умне тухать. Çакна хваттерсенче пурăнакан кашни çыннăн ăнланса илмелле. Пĕрле пулсан çеç эпир умри йывăрлăхсене çĕнсе çĕнĕ условисенче пурăнма пултаратпăр.

**(Малалли çитес номерте).**

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

Вулакансене пĕлме

## Конкурс иртет

Район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕ Муркаш – Кăпас автомаршрутпа (24 км) пассажирсем турттарма конкурс ирттерет. Конкурса юридицилле вăйра тăракансем те, индивидуаллă предпринимательсем те хутшăнма пултараççĕ. Документсен пакечĕсене вĕсен 2010 çулхи çу уйăхĕн 9-мĕшĕччен район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленине тăратмалла.

**Хамăр инф.**

Республикăра

## Правительство пуçлăхĕ – Н. Суслонова

***Апрелĕн 8-мĕшĕнче Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн черетсĕр çирĕм çиччĕмĕш сессийĕ иртнĕ. Унта депутатсем Николай Федоров Президент сĕннĕ кандидатурăпа килĕшсе республика Министрсен Кабинечĕн Председателĕ пулма Нина Владимировна Суслонована суйлассине ырлани çинчен пĕлтернĕ.***

Сесси пухни ăнсăртран мар. Ку должноçре ултă çула яхăн ĕçленĕ С. Гапликова федераллă правительствăн аппаратĕн пуçлăхĕн çумĕ пулса ĕçлеме куçарнă.

Депутатсем умĕнче Н. Суслонова та тухса калаçнă. Вăл палăртнă тăрăх, республика умĕнче тăракан стратегиллĕ задачăсене татса парас тесен, инновациллĕ тата малта пыракан технологисене пурнăçа кĕртни кирлĕ. Экономикăпа социаллă аталану, демографи тĕлĕшĕнчи лару-тăрăва лайăхлатмалла. Пур предприятисем те тупăшлă ĕçлеччĕр тесе тăрăшмалла.

Райадминистрацире

## Пултаруллисене – Хисеп грамоти

***Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2010 çулхи мартăн 15-мĕшĕнчи 163 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Вячеслав Осипович МЕДОВА**, «Оринино» хуçалăхăн Атапай участокĕн трактор бригадин бригадирне;

– **Владислав Михайлович НАЛИМОВА**, «Оринино» хуçалăх водительне;

– **Владимир Михайлович ТУШИЛКИНА**, Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн инженер-энергетикне;

– **Георгий Витальевич ФИЛИЧКИНА**, Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн слесарь-ремонтникне;

– **Евдокия Григорьевна ПЕТРОВСКАЯНА**, «Жилкомсервис» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн бухгалтерне.

Юбилей

## Саламлатпăр



Чи юратнă çыннăмăра – Хорнуй ялĕнче пурăнакан **Галина Алексеевна ПАВЛОВАНА** 60 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр, мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн, ачисемшĕн, питĕ пысăк телей. Эпир сана юрататпăр. Яланах пире ăс парса пулăшса пыратăн, йывăрлăхсене çĕнтерсе малалла пурăнма вăй-хал парса тăратăн. Сывлăху сан çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм та телейлĕ килтĕр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, кĕрекӳ тăвансемпе пуян пултăр.

**Салампа: мăшăрĕ, ачисем, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем.**

Хисеплĕ çыннăмăра, юратнă вĕрентекене, Юнкă ялĕнче пурăнакан **Александра Ивановна НИКОЛАЕВАНА** паян 80 çул тултарнă ятпа хĕрӳллĕн саламлатпăр. Пурнăçра çирĕп сывлăх, ăнăçу, канлĕ ватлăх сунатпăр. Вăй-халу малалла та çăл куç пек тапса тătăр. Пурнăç çулĕ телейлĕ те такăр пултăр.

**Саламлаканĕсем: 1960-мĕш çулта Урпаш шкулĕнчен вĕренсе тухнисем.**



Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Вăрманкассинче пурăнакан **Елена Степановна ЯКОВЛЕВАНА** 70 çул тултарнă ятпа чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламласа мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Сывлăху сан çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм килтĕр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, ачусен, мăнуксен ырлăхне курса савăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕ, кинĕ, мăнукĕсем, хăтисемпе тăхлачисем, çывăх тăванĕсем.**

Пирĕн юратнă та хаклă çыннăмăра – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Лидия Вениаминовна АЛЕКСЕЕВАНА** 60 çулхи юбилейпа саламлатпăр. Сана чун-чĕререн юратнине, хисепленине пĕлтерсе пурнăçри мĕн пур ырлăха сунатпăр. Çирĕп сывлăхлă, телейлĕ те вăрăм кун-çул пултăр санăн. Чир-чĕр санран пăрăнса çӳретĕр, кĕрекӳ вара тăванусемпе, çăкăр-тăварпа пуян пултăр. Эсĕ пурришĕн савăнса, сана тав туса сан умăнта пуç таятпăр.

**Саламласа: ачисем, кинĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсемпе çывăх çыннисем.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, Хорнуй ялĕнче çуралса ӳснĕ **Зоя Игнатьевна КОРОЛЬКОВАНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн, ăшшăн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, ырлăх, телей, вăрăм кун-çул, ăнăçу сунатпăр. Санăн ырă кăмăлу, яланах пулăшма хатĕр пулни пире вăй-хал парать, çунат хушать. Пуян кĕрекепе, йышлă çемйӳпе, мăнуксемпе тата тăванусемпе савăнса пурăнма Турри сана пулăшсах тăтăр. Эпир сана пурте юрататпăр. Эс пурри пирĕншĕн – пысăк телей.

**Пысăк салампа: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем.**